**Анатолий ЮМАН**

# Ваçça Аниççи çырăвĕсем



*Ваçça Аниççи*

2008 çулхи январĕн 6-мĕшĕнче чăвашсен малтанхи поэтесси Ваçça Аниççи (Васильева–Княгинина Анисия Васильевна) çуралнăранпа 115 çул çитрĕ. «Тăван поэзин пирвайхи чĕкеçĕ» тенĕччĕ ăна Чăваш халăх поэчĕ Стихван Шавлы 1966 çулта поэтесса «тупăннă» хыççăн «Çутă çăлтăр хăпарчĕ» ятпа тухнă малтанхи кĕнеки валли çырнă ум сăмахра. (Шел пулин те, 2006 çул вĕçĕнче пичетленнĕ «Чувашские писатели» справочникре темшĕн-çке Ваçça Аниççи çуралнипе вилнине палăртнă датăсене пăтраштарнă – 1892-1974 çулсем тесе асăннă, чăннипе вара унччченхи кăларăмсенче кун пирки нимĕнле иккĕленӳ те пулман – Ваçça Аниççи 1893 çулхи январĕн 6-мĕшĕнче çуралнă, 1975 çулхи декабрĕн 17-мĕшĕнче вилнĕ тесе çырнă. Çакă унăн çырăвĕсенчен те паллă. «Ĕнтĕ 78 çул тултартăм вĕт», - тесе çырать вăл 1971 çулхи февралĕн 13-мĕшĕнче ман пата янă çырăвĕнче. Е тепĕр цитата: «82-мĕш çул пурăнатăп вĕт ĕнтĕ çут тĕнчере... 6-мĕш январьте хам çуралнă куна палăртса ирттертĕмĕр...» (1974 çулхи февралĕн 24-мĕшĕнче çырнă çыруран). Апла пулсан ун чухне вăл 81 тултарса 82 кайнă пулнă.

Ваçça Аниççи кĕтмен çĕртен «тупăнни» чăваш поэзине юратакансемшĕн чăн-чăн сенсаци пулса тăнăччĕ. Поэтесса çуралса ӳснĕ тăрăхри райхаçат редакцийĕнче ĕçлесе пурăннă май эпĕ те çак пулăмран айккинче юлма пултарайман, «Тăван поэзин пирвайхи чĕкеçĕпе» çыру çӳретесси те çапла пуçланнăччĕ. Вăл та ман пата тăтăшах çырса тăратчĕ. Ара, ку уншăн тепĕр хут çуралнă пекех пулнă-çке. Литература тĕнчи асăрхаса хак пани çĕнĕрен аллине хутпа кăранташ тытма хавхалантарнă ăна. Димитровградри влаçсем чăвашсен ватă çыравçине пĕр пӳлĕмлĕ хваттер уйăрса панăччĕ. Çак хушăра юбилей уявĕсем килсех тăчĕç. Чăнлă районĕнче йĕркеленĕ культура енĕпе ĕçлекенсен тĕл пулăвĕнче хаклă хăнасем хушшинче Ваçça Аниççи те пурччĕ. Часах поэтессăн 75 çулхи юбилейĕ килсе çитрĕ. Ăна чыслама пирĕн районтан пысăк делегаци кайрĕ. Çав уява Шупашкартан Уйăп Мишшипе Юрий Скворцов килсе çитнĕччĕ. Сакăр вунă çулхи юбилейне чăваш çыравçисен тата та пысăкрах делегацийĕ килнĕччĕ. Шел пулин те, эпĕ çак уява каяймарăм. Каярах Ваçça Аниççи пурăннă çурт çине асăнӳ хăми уçнă уява хутшăнма тӳр килчĕ. Ăна юлашки çула ăсатнă самантсем те асрах.

ĔМĔР САККИ

Уявсем хыççăн ĕçлĕ кунсем пуçланаççĕ. Ваçça Аниççи литературăна таврăнни мана калама çук савăнтаратчĕ. Хам енчен эпĕ ăна яланах хавхалантарма тăрăшаттăм: çĕнĕ сăввисене ярса пама ыйтаттăм, вĕсене райхаçатра пичетлесе кăлараттăм, пичетленсе тухнă хайлавĕсене ярса параттăм т.ыт.те. Пĕрремĕш кĕнеки хыççăн иккĕмĕшĕ те тухса кайрĕ унăн. Иккĕмĕш кĕнекине кăларма пулăшаканĕ Юхма Мишши пулчĕ. Поэтесса Геннадий Юмартпа та тачă çыхăну тытнă. Ку вăл унăн ман пата çырнă çырăвĕсенче те палăрать.

Çав вăхăтрах «тупса» чысланă хыççăн унăн малашнехи шăпи литературăри чиновниксене кăсăклантарма пăрахни те сисĕнетчĕ. Вата çыравçăн çĕн хайлавĕсене хальхи поэзи шайĕнчен пăхса тиркекенсем те пулман мар. Пĕр ятлă-сумлă поэт виççĕмĕш кĕнеки валли тăратнă ал çырăвне тиркесе рецензи те çырнăччĕ. Çакă Аниçча аппана калама çук пăшăрхантарнă. Вăл хăй саманин çынни пулнă. Ман шутпа, çав шайран пăхса хакламалла та вăл çырнисене. Ватă çыравçăн ачалла тасалăхĕ, тӳр кăмăллăхĕпе типтерлĕхĕ унăн çĕнĕ калавĕсемпе сăввисенче палăрса тăратчĕç. Çавăнпа вĕсене хаçата яма хатĕрленĕ чух эпĕ автор стильне май пур таран тĕкĕнмесĕр упраса хăварма тăрăшаттăм. Кайран вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем поэтессăн иккĕмĕш кĕнекине те çав хальлĕн кĕнĕ.

Асăннă çулсенче Ваçça Аниççи çырнисем Мускаври издательствăсенче çапăнса тухрĕç. Сăмахран, 1961 çулта «Художественная литература» издательствăра А.Алга, М.Сироткин тата П.Хусанкай пухса кăларнă «Чувашская лирика» кĕнекере унăн «Ялта» сăвви пичетленнĕ. Расул Гамзатов Совет Союзĕнчи хĕрарăм-поэтсен кĕнекине пухса кăларнăччĕ. Унта та пурччĕ Ваçça Аниççи ячĕ. Тен, татах та пулнă пуль унашкал кăларăмсем. Епле пулсан та пĕр ӳстермесĕр çапла çирĕплетсе калама пулать: Ваçça Аниççи хăйĕн ача чухне çырнă «Ялта» сăввипех тăван литература историне кĕрсе юлма тивĕç пулчĕ. «Тупăннă» хыççăн вăл пире çĕнĕ сăвви-калавĕсемпе савăнтарчĕ.

Манăн архивра Ваçça Аниççи 1971-1974 çулсенче çырнă çырăвĕсем упранаççĕ. Каярах, йывăр чире пула çырайми пулсан, амăшĕн сывлăхĕ çинчен унăн аслă ывăлĕ Анатолий Александрович пĕлтерсе тăчĕ.

Ман шутпа, писателĕн çыру еткерлĕхĕ унăн пултарулăхĕн уйрăлми пайĕ пулса тăрать. Ваçça Аниççи çырăвĕсем пирки те çакнах каламалла. Вĕсенче пурнăçра хурашур сахал мар тӳссе ирттернĕ ватă çыравçăн уçă кăмăлĕ куç умне чĕррĕн тухса тăрать, хăйсен тасалăхĕпе тыткăнлать. Калас шухăшне вăл тӳррĕн, халăха сывăх чĕлхепе калать, сăнарсене çивĕччĕн асăрхама, вĕсене чунĕпе туйса хаклама пĕлет. Поэтессăн чун тĕкĕрĕ тенĕ пулăттăм эпĕ çав çырусене.

Сывă-и, Анатолий Федорович!

Епле пурăнатăр? Нумайранпа Сирĕн çинчен пĕр сас-чĕвĕ те илтмен.

Эпĕ пурăнатăп-ха, вилмен. «Чăвашсем Мускавра» сăвва ярса паратăп. Хаçата кĕртме май пулсан Хĕрарăмсен праçникĕ тĕлнелле пичете кĕртеймĕр-и?

Пурăнатăп-ха çаплах пĕр манерлĕ. Тухса çӳрейместĕп, тротуарсем çинче пăр, ӳксе аманасран хăратăп. Ĕнтĕ 78 çул тултартăм вĕт. Ирĕксĕрех пуçа шухăш пырса кĕрет: пурнăçăм ман сӳнекен вучах пек, вăйсăрланса пырать. Пĕтме вăхăт çитет. Нихăçан та тĕнчере пулман пек. Кĕскелет, кĕскелет пурăнас кун-çулăм. Вăй пĕтет. Савăнăç та пулман пек. Ак сӳнтерĕ пурнăçа хăрушă вилĕм, хуралса кăмрăкланнă кăвар пек.

Пĕлтĕр эпĕ Шупашкара ал çырăвĕсем янăччĕ. Шавлы редакцилеме Юхма Мишшине панă тесе çырать. Виличчен тепĕр кĕнеке алла тытса курайăп-и, çук-и?

Сывă пулăр!

Салампа А.Княгинина.

13.02. 71 ç.

Сывă-и, Анатолий Федорович!

Çырăвăра илтĕм. Ман сăвва пичете юрăхлă туса хаçата кĕртнĕшĕн тав! Пурăнатăп-ха çаплах пĕр манерлĕ. Иккĕмĕш кĕнекене кăларма васкамаççĕ. Эпĕ вилессе кĕтеççĕ пулмалла та, вилеймерĕм-ха.

Ман ал çырусем Шупашкарта 1969 çултанпа выртаççĕ ĕнтĕ. Книгоиздательствăран вĕсене Писательсен союзĕн правленине панă. Тўрлетсе кĕнекене юрăхлă тума. С.М.Ислюков редакцилеме Шавлыне хушнă, Шавлы Юхма Мишшине сĕннĕ. Халĕ ĕнтĕ пĕлместĕп, Юхма Мишши редакцилеме тытăннă-и, çук-и? Çыру тавраш çырмасть. Тен, малтан килĕшнĕ пуль те, унтан пăрахăç тунă пулĕ? Шавлы та шавламасть.

Юхма Мишшине эпĕ пĕлместĕп. «Чăваш писателĕсем» кĕнеке çинче вăл çук. Вăл ăçта пурăннине те, мĕн ятлине те пĕлместĕп. Ĕçлеме шухăшлать пулсан ман пата çыру ярĕччĕ.

Лисков Афанасий* çырнă тăрăх, Юхма Мишшине Шупашкарти чăваш писателĕсем юратмаççĕ тет: хăшне-хăшне критиклесе статья кăларнăшăн.

Ман ал çырусене пĕлтĕр Алга пăхса тухнăччĕ. «Хăшне-пĕрне, юрăхлăраххисене суйласа кĕнеке тума пулать», – тесе çырнăччĕ вăл.

Шавлы патне çырса ятăм-ха, ответлет-и, çук-и?

Çырăва çакăнпа вĕçлетĕп.

Сывă пулăр!

Салампа А.Княгинина.

28.03.71 ç.

Сывă-и, Анатолий Федорович!

Ĕçсем мĕнле пыраççĕ? Халĕ, хирте тырăсем пуçтарнă вăхăтра, Сирĕн ман çырăва вулама та вăхăт пулас çук та, çапах çырам-ха. Ан çилленĕр уншăн.

Пĕр сăвă чиксе яратăп. Вуласа пăхăрха. Сăвă манирне килет-и? Тен, хăçан та пулсан хаçата кĕртме май пулмĕ-и?

Пурăнатăп-ха çаплах. Сывлăхпа пĕр манирлĕ тăратăп. Анчах, куçсем вăйсăрланса пынипе пулас, çырас ĕçе яланах тытаймастăп. Шупашкартан нимĕнле хыпар та çук-ха. Июль уйăхĕнче Ф.Лисков килсе кайрĕ. Вăл, тен, унта та кĕрсе тухрĕ пуль? Тимĕрçенте эпĕ нумайранпа пулман. Кăçал та каяймарăм.

Пурăнатăп çаплах пĕр-пĕччен, упа пек.

Сывă пулăр!

Салампа А.Княгинина.

2.09.71 ç.

Сывă-и, Анатолий Федорович!

Çырăвăра илтĕм. Тавах Сире мана ырă хыпар пĕлтернĕшĕн.

Эсир Шупашкарта пултăр-и вара? Ăçтан пĕлтĕр ку хыпара?

Юхма Мишшинчен çыру тавраш илмен-ха. Кăçал эпĕ «Ком. ялавĕ» çырăнса илеймерĕм. Çавăнпа Шупашкарти ларутăрăва ним пĕлмесĕрех пурăнатăп. Ак халĕ çырăнасчĕ, кунти почтăсенче чăвашла хаçатсене каталога та кĕртмен.

Эсир Рогачевпа çыхăну тытатăр-и? Вăл ĕнтĕ виçĕ уйăх чĕрепе аптраса ĕçе те тухаймасть вĕт. Хайне курман та, открытка янăччĕ.

Эпĕ пурăнатăп-ха çаплах, пĕр манирлĕ. Ĕнтĕ кĕнеке тухиччен вилес марччĕ.

Салам редакцире ĕçлекенсене те, хăвăр çемйĕре те!

Сывă пулăр!

Салампа А.Княгинина.

16.09.71 ç.

Сывă-и, Анатолий Федорович!

Çырăвăра та, хаçатăрсене те илтĕм. Тавах сире Юхма çырнине «Ком.çутинче» пичетлесе кăларнăшăн.

Шупашкартан «Пионер сасси» хаçат та ярса пачĕç мана. Халĕ тата «Ком. ялавĕ» çинче вуларăм Шупашкар район-

* *Хусанта пурăннă ватă çыравçă. Вăл «Советская Россия» хаçатра Ваççа Аниççи çинчен сумлă статья çапса кăларнăччĕ.* – **А.Ю.**

ёнчи Апашри вăтам шкула Уйăп Мишши (М.Данилович Шумилов) ятне пани çинчен. Уншăн хĕпĕртерĕм. Хăй вилнĕ пулсан та унăн ятне чăвашсем манмаççĕ.

Кăçал эпĕ сывлăхпа хавшасарах пурăнатăп. Хĕлле грипп чирĕпе чирлерĕм те, çавăнтан вара усăлса çитейместĕп ёнтĕ: пĕтĕм организм айванланса юлчĕ.

Ну, сывă пулăр!

Салампа А.Княгинина.

13.05.72 ç.

«Сывă-и, Анатолий Федорович?

Епле пурăнатăр?

Ялсенче ёнтĕ тырă пуçтараççĕ пуль, эпĕ нумайранпа ялта пулман. Кăçал тырă ытла пит начар мар-и? Çанталăк ялан уяр тăрать. Пÿртре те, тулта та пăчă.

Шупашкартан çыру илкелетĕр-и? Ман пата книгоиздательствăран ниепле те хыпар çук. Юхма та хальлĕхе çырмасть. Вăл мана кĕнекене типографие пани çинчен тахçанах çырса пĕлтернĕччĕ. Договорне те, гонорарне те ярса памарĕç. Сениэль патне çыру ярсаттăм, ответ кĕтсе илеймерĕм. Эсир Юхма патне çырса пăхăр-ха, мĕн ответлет.

Виктор Васильевичпа *(Ваççа Аниççин шăллĕ.* – **А.Ю.**) Афанасий Лисков килсе кайрĕç. Мана «Ком. çути» хаçат парса хăварчĕç. Тавах Сире «Луноход- I» сăвва хаçата кĕртнĕшĕн тата ман пата ярса панăшăн!

Сывлăхпа тăратăп-ха пĕр манирлĕ. Çăва тухнăранпа хăнасем килкелерĕç. Хам ниçта та кайман. Хăлха начар илтнипе çул çине пĕччен тухма хăратăп.

Ну, сывă пулăр! Çыру яркалăр. Çемйĕре салам!

Ырлăх-сывлăх сунса,

салампа А.Княгинина.

Димитровград, 29. 07.72 ç.

Хаклă Анатолий Федорович!

Аса илÿ çыртăм. Ярса паратăп. Вуласа пăхăр. Çапла çырсан юрать-и? Сăвăсем те ярса парăп.

Дубов манран музей валли экспонатсем ыйтать. Тем ямалла? Кĕнеке çук. Хаçатран касса илнисене телевидени редакторĕ илсе кайрĕ те ярса памарĕха. Шупашкартан нимĕнле хыпар та çук. Пурăнатăп-ха çаплах, пĕр манирлĕ. Тухса çÿрейместĕп. Пăр çинче шуса ÿкесрен хăратăп.

Салампа А.Княгинина.

2.12.72 ç.

Çырăва çырса кăна пĕтертĕм, çыпăçтарса ёлкĕреймерĕм, Сирĕн çырăва кÿрсе пачĕç. Спасибо хаçат ярса панăшăн, райком валли текст çырса хатĕрленĕшĕн.

Юбилей ирттерме Ульяновскри писательсем те килмерĕç. Тен, вĕсене те йыхракан пулман пуль?

А.Княгинина.

Хаклă Анатолий Федорович!

Çырăвăра илтĕм. Спасибо хаçат ярса панăшăн. Кĕнекĕр мана пит килĕшрĕ. Юхма та мухтать ав. Анатолий Федорович! Анат Тимĕрçенти пионерсем мана Гагарин çинчен сăвă çырса яма ыйтаççĕ. Пионер отрячĕ Гагарин ячĕпе хисепленет вĕсен.

Çыркаларăм та, Сирĕн пата уласа пăхма яратăп. Пит начар мар-и? Хама хам шанаймастăп. Килĕшментерех тĕлтисене тÿрлетсе параймăр-и?

Сире ырлăх-сывлăх сунса

А.Княгинина.

20.01.73 ç.

Хисеплĕ Анатолий Федорович!

Çырăвăра та, хаçатăра та илтĕм. Уншăн тав!

Эпĕ «Ульяновская правда» çине те тав туса пичетлеме ыйтса янăччĕ те, вĕсем: «Не имеем возможности» – тесе çырса ячĕç.

Юхмаран çыру илтĕм. Вăл ман поэма сыпăкĕсене «Ялава» сĕнсе пăхасшăн. Шавлы çырать: «Юхма пысăк ĕç турĕ. Ăна уншăн тав!» – тет.

Ку начар тениех мар-ха, мухтани пулать. Юхма тăрăшман пулсан ман кĕнеке кăçал та тухман пулĕччĕ. Ăна уншăн пит пысăк тав! Анчах книгоиздательствăра ĕçлекенсем пысăкрах та илемлĕрех туса кăларайман. Пĕр-пĕр «тиллит-тиллит Микулай» çинчен çырнă кĕнеке пулсан тĕрлесе, сăрласа пĕтернĕ пулĕччĕç те, вилеймен карчăк кĕнекине пичетлесси интереслĕ япалах мар вĕт.

Сыв пулăр! Салампа А.Княгинина.

31.01.73 ç.

Сывă-и, Анатолий Федорович?

Хаçатăра илтĕм. Ман сăвва пичете кĕртнĕшĕн чĕререн тав!

Шупашкартан нимĕнле сас-чĕвĕ те çук-ха. Кĕнекене пичетлесе пĕтерсен пĕлтерĕç-ши? «Книга - почтой» урлă çырăнса илмелле пулать. Паян эпĕ хам кĕнекене тепĕр хут вуласа тухрăм. Унта йăнăш пуррине асăрхарăм.

41-мĕш страницăра. Ман упăшка 1927 çулта вилнĕ тесе çырнă. Ку тĕрĕс мар. Ман упăшка 1929 çулта декабрь уйăхĕн 30-мĕш кунĕнче вилнĕ.

1927-1928-мĕш çулсенче-ха вăл сиксе-сирпĕнсе халăх хушшинче ĕçлетчĕ. Çĕнĕ шкул лартас ĕçре, кулаксене пĕтерес, колхоз уçас шухăшпа ырми-канми ĕçлерĕ. 1929-мĕш çулхи кĕркунне урараан ӳкрĕ те декабрь уйăхĕнче вилчĕ. Корректурăна ман пата ярса памарĕç вĕт, эпĕ вăл йăнăша тӳрлетнĕ пулăттăм. Юхмана та вулаттарман. Шавлы çырать: «Юхма пысăк ĕç турĕ, ăна уншăн тав», – тет. Константин Петров кĕнекене мухтасах каймасть тет. Хăйĕнчен çыру илмен те-ха, çын урлă илтрĕм.

Мана Юхма редакцилени килĕшрĕ. Пĕр тĕлте кăна урăхларах çырмаллаччĕ пек туйăнать.

41-мĕш стр. Çĕнĕ Мăкшăри вăтам шкул Ямбака куçсан эпĕ ачасене кулак çуртĕнче вĕрентме тытăнтăм. Вăл çырнă «Хам пĕр кулак çуртĕнче пуçламăш шкул уçрăм», – тесе.

Ну, юрĕ-ха, вăл темех мар. Спасибо Юхмана мана кĕнеке кăлармa пулăшнăшăн тата ман аса илӳсене «Ялава» панăшăн.

Лисковран çыру илмен-ха, çырма вăхăчĕ çук пуль.

Рогачев урăх хваттере куçнă. Сирĕн пата çырса пĕлтерчĕ пуль?

Сывă пулăр! Çемйĕре салам!

А.Княгинина.

02.02.73 ç.

Ырă кун пултăр,
Анатолий Федорович!

Сирĕн çырăвăра та, поэма сыпăкне те, хаçатăра та илтĕм. Пуриншĕн те чĕререн тав тăватăп!

Поэма сыпăкĕ мана пит хумхантарчĕ. Иртсе кайнă йывăр кун-çулсем аса килчĕç. Эпир вăл вăхăтра Мелекесс çывăхĕнчи Авраль ятлă ялта пурăнаттăмăр. Мелекесе шурă чехсем пирĕн ял витĕр тухса килчĕç. Унтан Ульяновск еннелле пычĕç. Кунта кивĕ йĕрке туса хăварчĕç. Вĕсем хуçаланнă вăхăтра йĕркеллĕ вырăн çине те выртса çывăрайман. Кунсерен кама та пулсан персе вĕлерни е подвала хупса хурса нухайкăпа хĕнени çинчен илтеттĕмĕр. Каялла тарнă чухне Çарăмсан урлă хывнă кĕпере çунтарса Майна еннелле тарчĕç. Ун пеккине урăхран курмалла ан пултăр ĕнтĕ.

Рогачев ĕнер ман пата кĕрсе тухрĕ. Вăл отпуск вăхăтĕнче хăй çуралнă ялалла кайнă пулнă. Халĕ ĕнтĕ ĕçлет.

Юмарт патне ал çырăвĕсене ятăм.

Эпĕ Ямбакра пурăннă вăхăтра вырăсла юрăсене чăвашла куçарса çыркаланăччĕ. Юрă урокĕнче çав юрăсене ачасемпе юрлаттăмăр. Ун чухне хут хĕсĕккипе эпĕ вĕсене çырса хума та тăрăшман. Пăхмасăр юрлаттăмăр. Халĕ çав юрăсене аса илсе çыркалатăп-ха. Хăшне маннă та, хăшне астăватăп. Вĕсем ниçта та пичете кĕмен. Хам вилсен ахалех çухалаççĕ вĕт. «Ĕмĕт çитрĕ» кĕнекере юрăсем куçарни çинчен асăннă та юррисем ниçта та

курăнмаççĕ. Вăл юрăсене урăх поэтсем те куçарнă пулĕ те, эпĕ пĕлместĕп... «Сижу за решеткой», «Партизан Железняк», «Смерть комсомольца», «Маленький барабанщик», «Дан приказ ему на Запад», «Легко на сердце от песни веселой», «Колодники», «Проводы».

Куçарнă юрăсем татах та пур. Пĕчĕкçĕн вĕсене астуса илсе тетрадь çине çыркалатăп. Халĕ вăл юрăсене юрламаççĕ, манăçа кайса пырать ĕлĕкхи.

Сывă пулса тăрăр!

Çемйĕре салам!

Салампа А.Княгинина.

10.09.73 ç.

Сывă-и, Анатолий Федорович!

Çырăвăра илтĕм. Тавах хаçат ярса панăшăн! Юмарт аван çырнă. «Коммунизм ялавĕ» çине те тухнă-ши ку статья? Эпĕ халь вăл хаçата илсе тăмастăп. Эпĕ ун патне икĕ кĕнекен ал çырăвĕсене те (редакцилечченхи тĕслĕхсене) çырса янăччĕ. Манăн халĕ хам патăмра пичете кĕмен калавсен (юлашки çулсенче çырнисем) ал çырăвĕсем пур. Книгоиздательства ямалăхах çук вĕсем. Тата те çырăп, те çук. К.К.Петров мана виççĕмĕш кĕнеке хатĕрлеме сĕнет. Темĕн çав, халăм çитес çук. Куççем те начар кураççĕ, ытти енĕпе те сывлăх начар. Тухса çӳрейместĕп.

Çулла ытларах çӳресеттĕм, Тимĕрçенте те пултăм. Халĕ ăш аннипе аптăратăп. Врачсем: «Операци тумалла», – теççĕ. Эпĕ килĕшмерĕм. Операци туни маншăн леш тĕнчене кайма билет илнипе пĕрех. Эпĕ пасартан пĕр витре çĕр улми йăтса килтĕм те ăша хускатрăм.

Çемйĕре салам. Сывă пулăр!

Салампа А.Княгинина.

29.11.73 ç.

Рогачева нумайранпа курман. А.К.

Хаклă Анатолий Федорович!

Сире тата кил-йышăра çывхарса килекен Çĕнĕ çул ячĕпе чĕререн саламлатăп! Çĕнĕ çулта çĕнĕ телей, çирĕп сывлăх, çырас ĕçре çитĕнӳсем сунатăп! Хаçатăра илтĕм, уншăн пит пысăк тав!

А.Княгинина.

18.12.73 ç.

Хаклă Анатолий Федорович!

Хаçатăрсене илтĕм. Тавах «Тĕл пулăва» литература картине кĕртнĕшĕн! Аван пек туйăнать мана.

Манăн ĕнтĕ халĕ сăвăсем мар, çыру çырнипе те вăй пĕтет. 82-мĕш çул пурăнатăп вĕт ĕнтĕ çут тĕнчере. Пуç начар ĕçлет, куç начар курать, хамăн çаплах çырас килет.

Ĕнер Хĕрарăм праçникĕпе саламласа открыткăсем çыркаласа лартăм. 5-6 открытка çыртăм та, авăн çапнă пек ывăнтăм. Тен, нумаях та пурăнаймăп: нимĕн йăтма çук, ăш анать, пĕшкĕнме çук пуç çаврăнать, кăкăр хĕртет, вăхăт-вăхăт пуç тăнлавран ыратса каять. Ăш аннипе пульницана кайсаттăм та, эмел тавраш памарĕç. «Операци тумалла», – терĕç. Эпĕ килĕшмерĕм.

Юмартран çыру илкелетĕп. Вăл манăн «Атăл каччи» поэмăна «Пионер сасси» редакцине сĕнес пек çырнăччĕ. «В.Самойловпа калаçрăм ун пирки», – тет. Мĕн ĕçлеççĕ ĕнтĕ?

Сирĕн арăмăрăн ятне пĕлместĕп эпĕ. Ăна çывхарса килекен Хĕрарăм праçникĕ ячĕпе салам яратăп.

Рогачева хальтерех курман. 6-мĕш январьте хам çуралнă куна палăртса ирттертĕмĕр: хам ачасем, кунта пурăнакан тăвансем, хам вĕрентнĕ учениксем килнĕччĕ.

Эпĕ пурăнатăп çаплах пĕр-пĕччен. Магазинран апат-çимĕç Валя (хĕр) илсе килсе парать. Тухса çӳрейместĕп пулсан та пӳртре кăштăртаткаласа çӳретĕп-ха. Виктортан нумайранпа çыру илмен.

Сывă пулăр!

Салампа А.Княгинина.

24.02.74 ç.

Хаклӑ Анатолий Федорович!

Открыткӑра илтӗм. Уншӑн тав! «Тӗл пулӑва» «Тӑван Атӑл» журнал редакцине сӗннӗшӗн те чӗререн тав тӑватӑп. Пурӑнатӑп-ха ҫаплах. Хӗлле тухса ҫӳрейместӗмччӗ те, халӗ ҫӳрекелетӗп. Юмартран ҫыру илкелетӗп. Ытти ҫыруҫӑсем ҫырмаҫҫӗ.

Свердловскран Виктор (шӑллӑм) ҫыркалать. Вӑл июнь уйӑхӗнче Дубов Ив. Вас. юбилейне ирттерме килесшӗн. Корнилов ҫинчен «Ульяновск. правдӑра» вуларӑм.

Сайра-хутра Рогачев кӗркелесе тухать. Вӑл Ларин куҫарнӑ «Усал пуп» сӑвӑпа «Камран пулӑшу ыйтас?» сӑвӑсене Ҫӗнӗ Мӑкшӑ райхаҫатне ярса панӑ пулнӑ. Хаҫатне эпӗ курман та, пичетленӗ курӑнать: 3 тенкӗ гонорар ярса пачӗҫ. «Ком.ҫутинчен» янине те илтӗм. Уншӑн Сире пысӑк спасибо! Кил-йышна салам!

Тайма пуҫпа А.Княгинина.
5.05.74 ҫ.

Хаклӑ Анатолий Федорович!

Хаҫатӑра илтӗм. Уншӑн чун-чӗререн тав тӑватӑп!

Урӑх халӗрех ҫырнӑ япала ҫук. Манӑн Кузьмин Евгений ҫинчен ҫырнӑ поэмӑна эсир вуласа пӑхман, ҫавна ярса парӑттӑм Сирӗн пата вуласа пӑхма. Эпӗ ӑна «Ӗмӗт ҫитрӗ» кӗнекене кӗртес шухӑшпа Шупашкара янӑччӗ. Кӗртмерӗҫ. Халӗ кӗскетсе, рифмисене тӳрлеткелесе ҫӗнӗрен юсаса ҫыртӑм.

Пурӑнатӑп-ха ҫаплах пӗр манирлӗ. Халӗ Пайменӑн «Кӗперне» вулакалатӑп печекҫӗн. Кивӗ тӗнче пӗтсе ҫӗнӗ тӗнче епле пулса кайни ҫинчен ҫырать. Вӑл кӗнекене вуласан хам ӗмӗрӗмре курса иртнӗ япаласем пурте аса килеҫҫӗ. Анчах куҫ начар курать. Сыхланарах кӑна вулатӑп.

Дубов юбилейӗнче пултӑр-и? Витя Тимӗрҫене пынӑ чух кӗчӗ те, каялла килне кайнӑ чух кӗмерӗ. Рогачев ӑна кӗтсе ик-виҫӗ хутчен те килсе кайрӗ. Викторпа курса калаҫаймарӗ.

Шупашкара кайса килтӗр-и ӗнтӗ? Кама куртӑр, мӗн калаҫаҫ?

Ну, сывӑ пулӑр! Ольга Степановнӑна хӗрӳллӗ салам!

Ырлӑх-сывлӑх сунса А.Княгинина.
3.07.74 ҫ.

Хаклӑ Анатолий Федорович,
Ольга Степановна! Салам!

Нумаях пулмасть «Заря коммунизма» редакцийӗнчен гонорар илтӗм. Тавах Сире ман сӑвӑсене пичете кӗртнӗшӗн.

Шавлырен ҫыру илтӗм. Ӑна чӑваш халӑх поэчӗн хисеплӗ ятне панӑ иккен. Ҫавӑн ҫинчен пӗлтерсе ҫырнӑ «Советская Чувашия» хаҫатра Дедушкин ҫырнӑ статьяна касса илсе чиксе янӑ. Ӑна Рогачева патӑм.

Пурӑнатӑп-ха ҫаплах. Эпӗ 1965 ҫ. «Ҫӗнӗ хваттерте» ятлӑ сӑвӑ ҫырнӑччӗ. Халӗ ҫав сӑвва тӳрлеткелесе ҫӗнӗрен ҫыртӑм. Ярса паратӑп. Ку япалана мана хама кӑтартнӑччӗ Толя *(Васса Аниҫҫин аслӑ ывӑлӗ –* **А.Ю.)** арӑмӗ. Хӑйсем патне пурӑнма пырасран хӑратчӗ вӑл. Пропискӑра эп ҫав хваттерте тӑраттӑм. Пурӑнасса хӗр патӗнче пурӑнтӑм.

Сывӑ пулӑр! Ырлӑх-сывлӑх сунса
А.Княгинина.

Хаклӑ Анатолий Федорович,
Ольга Степановна!

Хаҫатсене илтӗм, уншӑн чӗререн тав тӑватӑп! Вӑл сӑвва эпӗ Сирӗн пата яриччен Рогачева вуласа патӑм.

– Кӑна «Капкӑна» ямалла, – терӗ вӑл. Эсир чӑнах та янӑ иккен. Уншӑн спасибо!

Халӗ тата пӗр сӑвӑ ҫыртӑм. Ку ачапӑча сӑмахӗсене эпӗ хам илтрӗм. Пӳрт ҫумӗнче выляса ҫӳрекен пӗчӗк хӗр ачасем калаҫаҫҫӗ:

– Сан аҫу ӑҫта? – тет пӗри вырӑсла.

– На рыбалке, – тет тепри.

– А мой на пьянке, – тет лешӗ. – Придет домой, будет драться.

– Чем с таким папой жить, я лучше без папы проживу, – тет виҫҫӗмӗш.

Унӑн, чӑнах та, ашшӗ ҫук.

Шупашкартан ҫыру ҫыракан ҫук. Юмарт та ҫырми пулчӗ.

Ҫу иртсе кайрӗ чип-чиперех. Сывлӑхпа пӗр манирлӗ тӑратӑп-ха.

Сывӑ пулӑр!

Салампа А.Княгинина.
14.08.74 ҫ.

Хаклӑ Анатолий Федорович,
Ольга Федоровна! Салам!

Епле пурӑнатӑр? Сывӑ-и? Эпӗ пурӑнатӑп-ха, ҫаплах пӗр манирлӗ, кӑштӑртатса ҫӳретӗп.

«Тӑван Атӑл» журналӑн 9-мӗш номерӗ тухнӑ-ши ӗнтӗ? Ман ҫавна пӗлес килет. «Тӗл пулӑва» журнала кӗртнӗши?

Кайран ярса панӑ сӑвва, пит начар пулсан, юсаса вӑхӑтӑра ан ирттерӗр. Шупашкартан ҫыракан никам та ҫук. Юмарт та ҫырма пӑрахрӗ.

Сывӑ пулӑр!

Салампа А.Княгинина.
8.10.74 ҫ.

Сывӑ-и, Анатолий Федорович,
Ольга Степановна!

Ҫырӑвӑра илтӗм. Хыпарсем пӗлтернӗшӗн тав! Эппин, эсир Шупашкарта пулнӑ-ха. «Чӑваш калавӗсем» тухнӑ тетӗр. Уйрӑм кӗнеке-и вӑл е журнал ҫине тухнӑ-и? Ман мӗнле калавсем тухнӑ-ши? Эпӗ хам ярса паман. Ман калавсен тетрачӗ Юхмара пур тата хӑшпӗр калава Юмарт патне ҫырса янӑччӗ. Ҫавсем, хӑшӗ те пулсан, пичете панӑ пуль. Ытти япаласене хам ямасӑрах пичете кӗртеҫҫӗ-ҫке? «Капкӑнра» ӗҫлекенсем мӗн кутӑнланаҫҫӗ? Эпӗ «Капкӑн» редакцийӗн адресне те пӗлместӗп, унта ӗҫлекенсен ятне те, хушамачӗсене те пӗлместӗп. Эпӗ вӑл сӑвва 1965-мӗш ҫулта, хама хваттер париччен, ҫырнӑччӗ. «Ком.ялавне», Юрьев патне ярсаттӑм. Пичете кӗртмерӗҫ. Рифмисем килсе кайманнипе пуль терӗм. Ҫав кунсенче «Коммунизм ялавӗ» ҫинче статья пичетлесе кӑларчӗҫ. Пӗр хӗрарӑм (ятне маннӑ) ҫырать хӑй хунямӑшӗпе пит килӗштерни ҫинчен мухтанса. Ку ӗнтӗ ман сӑвва вуласа пӑхнӑ-тӑр та мана питлесе ҫырать тесе шухӑшларӑм ун чухне. Начаррине ҫырмалла мар, аваннине ҫеҫ ҫырма хушаҫҫӗ иккен терӗм.

Юрьева эпӗ курнӑ. Вӑл ман «Мухтав» сӑвва килмен тӗлтисене тӳрлетсе хаҫатра кӑларнӑччӗ. (1965 ҫ.)

1973 ҫ. Тимӗрҫене тӗл пулӑва пырсан, эпӗ тӑвансем патӗнче хӑнара чухне ҫав «Ҫӗнӗ хваттерте» сӑвва каласа патӑм. Унта Афандеевпа Широков та пурччӗ.

– Ку сӑвва пичетленӗ-и ӑҫта та пулсан? – тет Афандеев.

– Ҫук, – терӗм.

– Ку сӑвва пичете кӗртес ҫук. Вӑл политика тӗлӗшӗнчен пичете юрӑхсӑр, – терӗ Широков Ф.Ал.

Сирӗн ҫырӑвӑра илсе вуласан ҫаксем пурте аса килсе кайрӗҫ. *(Ваҫҫа Аниҫҫин «Ҫӗнӗ хваттерте» сӑввине эпӗ райхаҫатра пичетлесе кӑларнӑччӗ. –* **А.Ю.**).

Халӗ тата тепӗр сӑвӑ ҫыртӑм. Ярса паратӑп. Вуласа пӑхӑр, мӗнлерех? Ман пата ват карчӑксем килсе ҫӳреҫҫӗ. Ку сӑвва пӗр карчӑк каласа панипе ҫыртӑм. Ун патне Якушкӑран племянниципе упӑшки килнӗ пулнӑ. Тухса кайнӑ чухне тав тӑвас вырӑнне: «Эпир ӑна курма килмен», – тесе кӳрентерсе хӑварнӑ. Ҫапла хӑш та пӗр ҫынсен пуклак пулаҫ чӗлхисем. Ват ҫын вӑл час кӳренет.

Рогачева куркалатӑп. Сире салам ҫырма каларӗ. «Темшӗн Ермилов ман пата ҫыру ҫырмасть», – тет. Дубов Иван Васильевич ман пата ҫыркалать. Вӑл ялан экспонат ярса пама ыйтать музей валли. Тем ямалла? Мӗн пур пек хутсене (ал ҫырӑвӗсене, документсене, хаҫатсене) хам виличчен салатса пӗтерес килмест. Тахҫан вилеп-ха? Тен, хама кирлӗ пулӗҫ?

Ну, ҫитӗ ҫырса. Сывӑ пулӑр!

Салампа А.Княгинина.